# САВАПЛĂ ПАВЕЛ АПОСТОЛ ЕФЕСРИ ЁНЕНЕКЕНСЕМ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

### 1-мĕш сыпăк

*Саламлани*

1 Турă ирĕкĕпе Иисус Христосăн апостолĕ пулма тивĕçнĕ Па-
велран – Христос Иисуса чунтан парăннă Ефесри ёненекенсене.
2 Сире Атте Туррăмăрпа Иисус Христос Хуçамăртан ырăлăхпа
канăçлăх пултăр.

*Турра мухтани*

3 Иисус Христос Хуçамăрăн Турри, Унăн Ашшĕ, мухтавлă пул-
тăр. Вăл пире, Иисус Христоспа пĕрлĕхлисене, чун-чĕмĕн тĕрлĕ
пилĕпе çӳлти сăвапа пилленĕ. 4 Вăл пире, Христоспа пĕрлĕхлисе-
не, сăваплă та таса, юратуллă пурăнччăр тесе, тĕнчене пултарич-
ченех суйласа илнĕ. 5-6 Хăйĕн чаплă ырăлăхне мухтамалла пултăр
тесе, Турă пире Хăйĕн ырă ирĕкĕпе Иисус Христос урлă ывăллă-
ха илмешкĕн чăн малтанах палăртса хунă, Хăйĕн савнă Ывăлĕ
урлă пире ырăлăх панă. 7 Ывăлĕ пире Хăйĕн Юнĕпе тӳлесе илни,
Унăн ырăлăхĕ тулли пулни пирĕн çылăхсене каçармалла турĕ.
8 Çав ырăлăха Вăл пире ытлашшипех панă çеç мар, унпа пĕрле
тĕрлĕрен ăслăлăх та, ăнланулăх та панă. 9 Хăйĕн ырă ирĕкне Ывă-
лĕ урлă пурнăçлама Вăл чăн малтанах палăртса хунă, çапла май-
па пире Хăйĕн шухăшĕн вăрттăнлăхне уçса панă. 10 Çакна Вăл
вăхăт тулса çитсессĕн, çӳл тӳперипе çĕр çинчине пĕрлештерсе,
Христоса пуç пултарас тесе тунă. 11-12 Пирĕн, Христоса маларах

ёненнисен, Турра чапа кăларма тăрăшмалла. Христоспа пĕрлĕх-
лĕ пулса эпир Турă еткерне илессе пĕтĕмпех Хăй ирĕкĕпе Тăва-
кан малтанах палăртса хунă. [13] Чăнлăх сăмахне – çăлăнăçăн Ырă
Хыпарне – илтсессĕн, Ăна ёненсе, эсир те Христоспа пĕрлĕхлĕ
пултăр. Сире, Христоса пула, хăвăра пама пулнă Святой Сывлăш
пичечĕпе палăртнă. [14] Пирĕн Турра мухтава кăларма тăрăшмалла.
Турă пире çылăх тыткăнĕнчен тӳлесе илĕ. Эпир Хăйĕн еткерне
тивĕçессе унччен вара пире Святой Сывлăш шантарать.

*Павел кĕлтуни*

[15] Çавăнпа эпĕ те, эсир Христос Иисуса ёненни çинчен, ёне-
некенсене пурне те юратни çинчен илтрĕм те, [16] хамăн кĕллĕмре
сире аса илсе, сирĕншĕн Турра тăтăшах тав тăватăп. [17] Иисус
Христос Хуçамăрăн Турри, мухтав Ашшĕ, Хăйне пĕлмешкĕн си-
ре ăслăлăх паракан тата вăрттăнлăх уçакан Сывлăш патăрччĕ те-
тĕп. [18] Хăй сире чĕнсе илсе шанчăк панине, Унăн ёненекенсене
парас еткерĕ епле пысăк та чаплă пулнине сире пĕлтермешкĕн
чĕрĕрсене уçтăрччĕ тетĕп. [19] Пирĕн, Унăн аслă вăйне пула Ăна
ёненекенсен, хамăр ăшăмăрти Унăн виçесĕр вăй-хăватне пĕлмел-
ле пултăрччĕ тетĕп. [20] Турă çав аслă вăй-хăвата Христос урлă па-
лăртрĕ: Ăна вилĕмрен чĕртсе тăратса, çӳл тӳпере Хăйĕн сылтăм
енне лартрĕ. [21] Вăл Христоса пур тĕрлĕ патшасенчен, пуçлăхсен-
чен, вăйлисемпе хуçасенчен – кунти пурăнăçра кăна мар, лери
пурăнăçра та – çĕрпе пĕлĕт çинчи мĕн пур влаçран та аслăрах
турĕ. [22] Вăл Христоса пуринчен те асли – Чиркӳ Пуçĕ – туса,
пурне те Унăн ури айне туса, Ăна пăхăнмалла турĕ. [23] Чиркӳ –
Христос Ӳт-пĕвĕ, пурне те Тултараканăн туллилĕхĕ пулса тăрать.

## 2-мĕш сыпăк

*Вилĕмрен – чĕрĕлĕхе*

[1] Турă йĕркине пăснăран тата çылăхлă пулнăран эсир те вилĕч-
чĕ. [2] Çак тĕнче йăлипе, усал сывлăшсемпе хуçаланакан пуçлăх
ирĕкĕпе эсир тахçан çылăхлă пурăннă. Çав пуçлăх Турра хирĕç-
çисемпе халĕ те хуçаланать-ха. [3] Тахçан эпир хамăр та çавнаш-
калахчĕ: ӳт-пӳ хистенĕ хыççăн, ӳт-пӳпе шухăш-кăмăл илĕртнĕ
хыççăн каяттăмăр. Эпир те, этем йăхĕнчисем, ыттисем пекех,
Турă çилли çитес çынсем пулнă. [4-5] Анчах та иксĕлми ырăлăхлă

Турă пире, çылăха кĕнĕрен вилнĕскерсене, Хăйĕн пысăкран та
пысăк юратулăхĕпе юратса, Христоспа пĕрле чĕртрĕ. Унăн ырă-
лăхĕпе эсир çăлăнăç тупрăр. [6] Вăл сире, Христоспа пĕрле чĕртсе,
çӳл тӳпере Христос Иисуспа пĕрле лартнă. [7] Çакна Вăл пире
пулас ĕмĕрте Христос Иисус урлă Хăйĕн юратулăхĕнче палăра-
кан иксĕлми ырăлăхне кăтартас тесе тунă. [8] Мĕншĕн тесен эсир
Унăн ырăлăхĕпе ĕненсе çăлăнăç тупрăр. Ку вара сирĕн тивĕçĕр
мар, Турă парни. [9] Çăлăнăçа ĕçе кура памаççĕ, çавăнпа никам та
ĕçĕсемпе мухтаннă ан пултăр. [10] Мĕншĕн тесен пире Турă çапла
пултарнă: Христос Иисуспа пĕрлĕхлĕ туса, пире Хăй палăртнă
ырă ĕçĕсене пурнăçламашкăн хатĕрленĕ.

*Христоспа пĕрлĕхлĕ пулни*

[11] Ĕнтĕ çакна ан манăр: çуралнă тăрăх, эсир тахçан урăх халăх
çыннисем шутланнă. Сире „ӳт кастарнă“ текеннисем „ӳт кас-
тарманнисем“ тетчĕç. Ӳт кастарасси вара – этем аллипе тунă
ĕç кăна. [12] Ун чухне эсир Христоссăр пулнă, Израиль халăхĕн-
чен те, Турă шантарса панă халалран та аякра тăнă; çак тĕнче-
ре шанчăксăр, Турăсăр пурăннă. [13] Халĕ вара эсир, тахçан Турă-
ран аякра пулнисем, Христос Иисуспа пĕрлĕхлĕ, Унăн Юнĕ урлă
эсир Турă патне çывхартăр. [14] Мĕншĕн тесен Христос урăх халăх-
семпе иудейсене çураçтарнă, пĕр халăх туса пĕрлештернĕ, вĕсене
уйăрса тăракан чăрмава аркатнă. [15] Хăйĕнпе пĕрлĕхлĕ пултарса
иккĕшĕнчен пĕр çĕнелнĕ этем тăвас тесе, килĕшӳ кӳрес тесе ку-
райманлăха Хăйĕн вилĕмĕпе пĕтернĕ, саккун хушнине Хăйĕн вĕ-
рентĕвĕпе пăрахăçланă. [16] Вăл Хăйĕн хĕрес çинчи асапĕпе курай-
манлăха пĕтерсе, иккĕшĕнчен пĕр туса, вĕсене Турăпа çураçтарас
тенĕ. [17] Вара, килсессĕн, Вăл сире, Турăран аякрисемпе çывăххи-
сене те, канăçлăх кӳрекен Ырă Хыпар пĕлтернĕ. [18] Христоса пула
ĕнтĕ икĕ халăхĕшĕн те, пĕр Сывлăш витĕмĕпе, Ашшĕ патне кай-
малли çул уçăлчĕ.

[19] Çапла вара, эсир çичĕ ют та мар, ютран килнисем те мар,
эсир – Турă халăхĕн пĕр тан çыннисемех, Турă ачисемех пулатăр.
[20] Эсир апостолсемпе пророксем хывнă никĕс çинче çирĕп тăра-
тăр. Никĕсри тĕп чул вара – Иисус Христос Хăй. [21] Çав тĕп чул
çинче пĕтĕм çурт тытăнса тăрать. Вăл, тикĕс купаланса, Хуçамăра
халалланă таса Чиркӳ пулса пырать. [22] Христоспа пĕрлĕхлĕ пулса,
Турă Сывлăшĕ пулăшнипе эсир те Турă çурчĕ пулса пыратăр.

## 3-мӗш сыпӑк

*Павел — ытти халӑхсен ӳкӗтлевҫи*

[1] Ҫавӑнпа та эпӗ, Павел, сирӗншӗн, урӑх халӑх ҫыннисемшӗн,
Иисус Христос тыткӑнӗнче пурӑнатӑп. [2-3] Сире валли хатӗрленӗ
Хӑйӗн ырӑлӑхне Турӑ мана пани ҫинчен, мана Турӑ вӑрттӑнлӑхӗ
уҫӑлни ҫинчен эсир илтнӗ ӗнтӗ. Ун пирки эпӗ маларах кӗскен
ҫырнӑччӗ. [4] Эппин, ҫавна вуласа тухсассӑн, эпӗ Христос вӑрттӑн-
лӑхне епле ӑнланнине эсир пӗлме пултаратӑр. [5] Этемлӗхӗн иртнӗ
ӑрӑвӗсене ҫав вӑрттӑнлӑха пӗлме паман, анчах та халӗ Святой
Сывлӑш ҫав вӑрттӑнлӑха Унӑн сӑваплӑ апостолӗсемпе пророкӗ-
сене уҫса панӑ. [6] Вӑрттӑнлӑхӗ вара ҫакӑ: Ырӑ Хыпар пӗлтернипе
ытти халӑхсем те иудейсемпе пӗрлех еткер илме тивӗҫлӗ, вӗсем
те пӗр ӳт-пӳ пайӗсемех, вӗсем те Турӑ Иисус Христос урлӑ пама
шантарнине илес ҫынсемех. [7] Турӑ Хӑйӗн хӑвачӗпе мана ырӑ-
лӑхне парнеленине пула, эпӗ Ырӑ Хыпаршӑн ӗҫлесе тӑракан
пултӑм. [8] Мана, ӗненекенсенчен пуринчен те тивӗҫсӗррине, ҫав
ырӑлӑха – Христосӑн ӑсласа илейми пуянлӑхӗ ҫинчен ытти ха-
лӑхсене пӗлтерме – шанса панӑ. [9-10] Ҫӳл тӳпери пуҫлӑхсемпе
влаҫсене Туррӑн тӗрлӗ енлӗ ӑслӑлӑхӗ Чиркӳ урлӑ халӗ паллӑ пул-
тӑр тесе, Туррӑн вӑрттӑнлӑхне, шухӑшне манӑн пурне те уҫса па-
малла. Ҫав вӑрттӑнлӑх вара Иисус Христос урлӑ пурне те туса
ҫитернӗ Турӑра мӗн ӗмӗртен пытарӑнса упраннӑ. [11] Ӗмӗрсем пуҫ-
ланиччченхи ҫав шухӑшне Турӑ вара Христос Иисус урлӑ, пирӗн
Хуҫамӑр урлӑ, пурнӑҫланӑ. [12] Унпа пӗрлӗхлӗ пулса, Ӑна ӗненсе,
эпир ҫирӗп кӑмӑллӑн та шанчӑклӑн Турӑ патне ҫывхарма пулта-
ратпӑр. [13] Ҫавӑнпа та эпӗ сирӗншӗн хурлӑх курнӑшӑн ан куля-
нӑр, вӑл асапсене эпӗ сире мухтава кӑларасшӑн тӳсетӗп.

[14] Эпӗ ҫавӑнпа та Иисус Христос Хуҫамӑрӑн Ашшӗ умне чӗр-
куҫленетӗп. [15] Ҫӳл тӳпери тата ҫӗр ҫинчи кирек епле йӑх-ӑрӑва та
ят параканӗ – Вӑл. [16] Хӑйӗн мухтавӗн пуянлӑхне кура Вӑл сире
вӑй патӑрччӗ, Хӑйӗн Сывлӑшӗпе ӑшӑрсенчи ҫӗнелнӗ этеме ҫи-
рӗплетсе ӳстертӗрччӗ тесе кӗлтӑватӑп. [17] Ӗненӗве пула сирӗн
чун-чӗрӗрте Христос пурӑнтӑрччӗ тетӗп. [18] Юратулӑх сирӗнте ҫи-
рӗп тымар янӑран сирӗн ытти мӗн пур ӗненекенсемпе пӗрлех
ӗненӗвӗн анлӑш-тӑршшӗне, тарӑнӑш-ҫӳллӗшне пӗлмелле пул-
тӑрччӗ, [19] чунӑрсене Туррӑн туллилӗхӗпе пӗтӗмпех тултармашкӑн

Христосăн ăсласа илейми юратулăхне ăнланмалла пултăрччĕ
тетĕп. 20 Хăйĕн вăй-хăвачĕпе пирĕн ăшăмăрта хамăр ыйтнинчен
те, ĕмĕтленнинчен те ытларах Тăвакана мухтав пултăр. 21 Иисус
Христоспа пĕрлĕхлĕ Чиркӳре ламран лама, ĕмĕр-ĕмĕр Турра мух-
тав пултăр. Аминь.

## 4-мĕш сыпăк

*Чиркӳ пĕрлĕхĕ*

1 Çапла вара эпĕ, Хуçамăршăн тăрăшнине пула тĕрмере лара-
канскер, сире тархаслатăп: хăвăра чĕнсе илнине тивĕçлĕ пулăр.
2 Йăваш та сăпайлă, чăтăмлă пулăр, пĕр-пĕрне юратса-каçарса
пурăнăр. 3 Турă Сывлăшĕ панă пĕрлĕхе пĕр-пĕринпе килĕштерсе
упрама тăрăшăр. 4 Хăвăра Турă чĕнсе илсе пĕртен-пĕр шанчăк
панă пекех, эсир пĕр ӳт-пӳпе, пĕр чун-чĕмпе пурăнăр. 5 Хуçамăр
пĕрре, ĕненӳ пĕрре, шыва кĕни те пĕрре; 6 Туррăмăр пĕрре, Вăл
пурин Ашшĕ те. Вăл – пуринчен те çӳлте, Хăйĕн хăватне пурин
урлă та тăвать, Вăл – пурин ăшĕнче те. 7 Пире кашнинех Хрис-
тос ырăлăх виçсе панă. 8 Çавăнпа çапла каланă та: «Çӳле хăпарсан
Вăл тăшманĕсене тыткăна илнĕ, этемсене вара тивĕçлĕ парнесем
панă». 9 „Çӳле хăпарсан" тени вара мĕне пĕлтерет-ха? Маларах
Вăл çĕр тĕпне анса курнине мар-и вара? 10 Çапла ĕнтĕ, пĕрре ан-
са, тепре çӳл тӳперен те çӳлерех çĕкленсе, Вăл çут тĕнчене Хă-
йĕнпе тултарнă. 11 Вара Вăл хăшĕсене апостол, хăшĕсене пророк,
хăшĕсене Ырă Хыпар пĕлтерсе çӳрекен, хăшĕсене вĕрентӳçĕсем-
пе чун кĕтӳçисем тунă. 12 Çав çынсене ĕненекенсен сăваплăхне
ӳстермешкĕн, Турăшăн ĕçлемешкĕн, Христос Ӳт-пĕвне – Чиркĕ-
ве – тĕреклетмешкĕн уйăрса лартнă. 13 Турă Ывăлне ĕненсе, пĕл-
ме тăрăшса, эпир пурте пĕр пуличчен, хамăр та Христос пекех
паха, аталанса çитнĕ арсем пуличчен çапла пулмалла. 14 Пирĕн
ĕнтĕ çаплах пĕчĕк ачасем пек пулмалла мар. Вĕсене кирек епле
вĕрентӳ çилĕ те, иккĕлентерсе, çавăрттарса ярать; улталама вĕ-
ренсе çитнĕ чее çынсем хыççăн вĕсем часах каяççĕ. 15 Пирĕн вара
чăнлăха пĕлтерсе, юратса чун-чĕрепе Ун патнелле ӳссе çĕклен-
мелле; Христос вăл – Пуç. 16 Пĕтĕм Ӳт-пĕвĕн – Чиркĕвĕн – тĕр-
лĕ пайĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăраççĕ, пĕтĕм Ӳт-пӳ пĕрлĕхлĕ,
Ӳт-пĕвĕн кашни пайĕ кирлĕ пек ĕçлет. Пуçа пула вара пĕтĕм
Ӳт-пӳ юратулăхра ӳссе, хăйне хăй аталанса пырать.

*Кивĕ пурăнăçран çĕнĕ пурăнăç патне*

[17] Çавăнпа та эпĕ сире Хуçа Турă ячĕпе тархаслатăп: малашне
тĕлсĕр те пушă ăс-пуçлă ытти халăхсем пек ан хăтланăр. [18] Вĕсен
ăс-тăнĕ çуталман-ха. Турра пĕлменрен, хытă чун-чĕреллĕ пулнă-
ран вĕсем Турăран ютшăнса пурăнаççĕ. [19] Вĕсем, намăс-симĕсе
çухатса, нихăçан тăранмасла тем тĕрлĕ ирсĕрленсе, аскăнлăха
ярăннă. [20] Эсир вара апла мар: Христоса ĕненсессĕн епле пурăн-
маллине пĕлетĕр. [21] Мĕншĕн тесен эсир Ун çинчен илтнĕ, Ăна
ĕненсе чăнлăха пĕлнĕ (чăнлăх вара – Иисусра). [22] Çав чăнлăха
пула ултавлă аскăн кăмăл хыççăн кайса çĕрĕшсе пĕтекен кивĕ
çыннăн пурăнăç йĕркине пăрахăçламаллине, [23] ăс-тăнпа чун-чĕ-
ме çĕнетмеллине эсир пĕлетĕр. [24] Турă евĕрлĕ пултарнă, чăнлăха
пула тӳрĕ те сăваплă пурăнакан çĕнĕ этем сăнлăхне йышăнмал-
лине те пĕлетĕр.

*Çĕнĕ пурăнăç йĕрки*

[25] Сирĕнтен кашниех, суялăха пăрахăçласа, хăвăра çывăх çынна
чăннине калатăр, мĕншĕн тесен эпир пĕр ӳт-пӳ пайĕсем. [26] Çил-
ленсен те çылăха ан кĕрĕр: хĕвел аниччен çиллĕр иртсе кайтăр.
[27] Шуйттана хăвăра улталама ан парăр. [28] Кам вăрласа пурăннă,
малашне ан вăрлатăр. Ху валли ху ĕçлесе ил, вăл çитмен пурăнăç-
па пурăнакана та пулăшма çиттĕр. [29] Чĕлхе-çăварăртан пĕр юрăх-
сăр сăмах та ан тухтăр, ĕненме ӳкĕтлекен ырă сăмах кăна тухтăр.
Çав сăмах итлекене ырăлăх кӳтĕр. [30] Туррăн Святой Сывлăшне ан
хурлăр, çылăхран тӳлесе илес кун валли сире Святой Сывлăш пи-
чечĕпе паллă тунă. [31] Кирек епле тарăхупа хаярлăх та, çилленӳ те,
кăшкăрашу та, киревсĕр сăмах та, ытти усаллăх та сиртен аякра
тăтăр. [32] Пĕр-пĕринпе ырă пулăр, пĕр-пĕрне хĕрхенĕр, Христос
урлă Турă сире каçарнă пек, эсир те пĕр-пĕрне каçарăр.

**5-мĕш сыпăк**

[1] Çапла вара, юратакан ачисем пек пулса, Турă евĕр пулма тă-
рăшăр, [2] пĕр-пĕрне юратса пурăнăр. Христос та, пире юратса,
пирĕншĕн Хăйне Хăй парнелĕхе, Турра юрăхлă ырă парнелĕхе
кӳнĕ. [3] Турра ĕненекенсен хăйсене тивĕçлĕ тыткаламалла, çавăн-
па сирĕн хушшăрта аскăнлăхпа тĕрлĕ ирсĕрлĕх, çăткăнлăх пирки

калаçу та ан пултăр. [4] Тата усал сăмах калани, пуш сăмах калаç-
ни, вырăнсăр шӳтлени сире килĕшмест, тав сăмахĕ кăна килĕ-
шӳллĕ. [5] Ĕнтĕ çакна пĕлсе тăрăр: нимĕнле аскăнчăк та, ирсĕр çын
та, мулшăн çунакан та Христоспа Турă Патшалăхĕн еткерне иле-
ес çук. Унашкалли кĕлеткесене пуççапаканпа пĕрех.

*Çутă ачисем пек пурăнасси*

[6] Хăвăра пуш сăмахпа илĕртсе улталама ан парăр. Унашкалли-
сене, Турра хирĕççисене, Турă çилли çитет. [7] Çавăнпа та вĕсемпе
пĕр каварлă ан пулăр. [8] Эсир те тахçан тĕттĕмлĕхре пурăннă. Ха-
лĕ вара, Хуçамăрпа пĕр пулса, çутăлăха тухрăр. Эппин çутă ачи-
сем пек пурăнăр. [9] Мĕншĕн тесен Святой Сывлăшăн çимĕçĕсем
çаксем: ырăлăх, тӳрĕлĕх тата чăнлăх. [10] Турра мĕн юрăхлине пĕл-
мешкĕн тăрăшăр. [11] Тĕттĕмлĕхĕн усăсăр ĕçĕсене ан хутшăнăр,
хутшăнма мар – питлĕр. [12] Мĕншĕн тесен тĕттĕмлĕх ачисен вăрт-
тăн ĕçĕсем çинчен калама та намăс. [13] Çапах та çутта пула мĕн
питлени палăрать. Çутăра палăрни вара йăлтах курăнса тăрать.
[14] Çавăнпа та каланă ĕнтĕ: «Эй, чунна çывратса янăскер, вăран та
вилĕмрен чĕрĕлсе тăр, вара сана Христос çути çутатĕ».

[15] Çавăнпа та астăвăр: хăвăра ăссăррисем пек мар, ăслисем пек
асăрхануллă тытăр. [16] Вăхăта хаклама пĕлĕр, мĕншĕн тесен сама-
нисем пит усал. [17] Çапла вара, çăмăлттай шухăшлă ан пулăр, Турă
ирĕкне пĕлсе çитмешкĕн тăрăшăр. [18] Эрех ĕçсе ӳсĕрĕлсе ан çӳрĕр,
вăл путсĕре кăларать. Ун вырăнне чун-чĕрĕре Святой Сывлăшпа
тултарăр. [19] Пĕр-пĕрне псалом, мухтав юрри, кĕлĕ юрри сăмахĕ-
семпе ӳкĕтлĕр. Пĕтĕм чĕререн Хуçа Турра мухтаса юрлăр. [20] Ха-
мăр Хуçамăр Иисус Христос ячĕпе яланах Атте Турра пуриншĕн
те тав тăвăр, [21] Турăран хăраса, пĕр-пĕрне итлесе пурăнăр.

*Упăшкисемпе арăмĕсем*

[22] Эй, арăмсем! Упăшкăрсене Хуçа Турра пăхăннă пек пăхăнăр.
[23] Мĕншĕн тесен Христос – Чиркĕвĕн Пуçĕ те, Вăлах – ĕнене-
кенсене Çăлаканĕ те пулнă пекех, упăшки те арăмĕн пуçĕ пулса
тăрать. [24] Чиркӳ Христоса епле пăхăнать, арăмĕн те пур енчен те
упăшкине пăхăнмалла.

[25] Эй, арçынсем! Арăмăрсене Христос ĕненекенсене юратнă
пек юратăр, Вăл Чиркӳшĕн Хăйĕн пурăнăçне панă. [26] Çакна Вăл
Чиркĕве сăмахпа сăваплатса тасатмашкăн шыва кĕртес тесе,

[27] мухтавлă Чиркӗвӗн – Хăйӗн çураçнă хӗрӗн – нимӗнле çитмен-
лӗх те ан пултăр тесе, вăл сăваплă та таса пултăр тесе тунă.
[28] Упăшкисен арăмӗсене хăйсен ӳт-пӗвне юратнă пекех юратмалла:
арăмне юратакан хăйне те юратать. [29] Мӗншӗн тесен хăйӗн ӳт-пӗв-
не юратман, курайман çын çук. Хуçамăр Хăйӗн Чиркӗвӗшӗн тă-
рăшнă пекех, этем те хăйӗн ӳт-пӗвне тутă та ăшă усрать. [30] Эпир
вара – Унăн ӳчӗпе шăм-шакӗнчен пулнă Унăн Ӳт-пӗвӗн пайӗсем.
[31] «Çавăнпа та этем хăйӗн ашшӗпе амăшне пăрахӗ те арăмӗ çумне
çыпçăнӗ; вара иккӗшӗ пӗр ӳт-пӳ пулӗç», – тенӗ Çырнинче. [32] Çакă
питӗ пысăк вăрттăнлăх; çак сăмахсене Христоспа Чиркӳ пирки
те каланă тесшӗн эпӗ. [33] Сирӗнтен кашниех арăмне хăйне юратнă
пек юраттăр. Арăмӗ вара хăйӗн упăшкине хисеплетӗр.

### 6-мӗш сыпăк

*Ачасемпе ашшӗ-амăшӗсем*

[1] Эй, ачасем! Аçăр-аннӗре Хуçа Турра юрăхлă пек итлӗр, çакă
тӗрӗс пулать. [2] Чи малтанхи пил-хушура пама пулнине шантарса
çапла каланă: «Аçупа аннӳне хисепле; [3] вара хăвна лайăх пулӗ,
çӗр çинчи кун-çулу вăрăм килӗ». [4] Эсир те, ашшӗсем, ачăрсене
пули-пулми ан тарăхтарăр. Вӗсене Хуçа Турă вӗрентӗвӗпе тата
ӳкӗчӗпе пăхса ӳстерӗр.

*Чурасемпе хуçисем*

[5] Эй, чурасем! Çӗр çинчи хуçăрсене хăраса-чӗтресе, пӗтӗм чӗ-
ререн, Христоса пăхăннă пек пăхăнăр. [6] Йăпăлтисем пек, куç
умӗнче кăна тăрăшкаланçи ан тăвăр; пӗтӗм чунран Турă ирӗкне
пурнăçласа, Христос чурисем пек пулăр. [7] Çыншăн мар, Хуçа Ту-
рăшăн ӗçленӗ пек тăрăшса ӗçлӗр. [8] Çакна пӗлсе тăрăр: чура-и,
ирӗклӗ çын-и – пурпӗрех – кашни мӗн чухлӗ ырă тунă, Хуçамăр
ăна çавăн чухлӗ парӗ. [9] Эсир те, хуçасем, чурасемпе çавнашкалах
ырă пулăр, вăйпа хăратма пăрахăр. Çакна астăвăр: вӗсен те, си-
рӗн те тӳпере пӗр Хуçа, çын кам пулнине Вăл пăхмасть.

*Туррăн çар тумтирне тăхăнăр*

[10] Тăванăмсем! Тата эпӗ çакна каласшăн: Хуçа Турăпа, Унăн
вăй-хăвачӗпе тӗрекленӗр. [11] Шуйттанăн вăрттăн каварӗсене хирӗç
тăмашкăн Туррăн çар тумтирне тăхăнăр. [12] Мӗншӗн тесен эпир

ӳтлӗ-юнлӑ ҫынсемпе ҫапӑҫмастпӑр. Эпир тӳпери пуҫлӑхсене,
влаҫсене, ҫак тӗттӗмлӗх тӗнчине тытса тӑракансене, ҫӗрпе пӗлӗт
хушшинчи усаллӑх сывлӑшӗсене хирӗҫ тӑратпӑр. 13 Ҫавӑнпа та,
хура кунсем ҫитсессӗн хирӗҫ тӑмашкӑн, парӑнмасӑр йӑлтах тӳссе
ирттермешкӗн Туррӑн ҫар тумне-хатӗрне илӗр. 14 Эппин чӑнлӑх
пиҫиххине ҫыхса, тӳрӗлӗхӗн тимӗр тумне тӑхӑнса, ҫирӗп тӑрӑр.
15 Канӑҫлӑх ҫинчен пӗлтермешкӗн хатӗр пулни сирӗн урана тӑ-
хӑнмалли пултӑр. 16 Унтан та ытларах, ӗненӗвӗн ум хӳттине
тытӑр – унпа эсир шуйттанӑн ухӑ йӗпписене, хӗртнӗскерсене,
пурне те сӳнтерме пултаратӑр. 17 Тата ҫӑлӑнӑҫӑн шлемне тӑхӑнӑр.
Хӑвӑрпа пӗрле чун-чӗм хӗҫне – Турӑ Сӑмахне – илӗр. 18 Тӗрлӗ-
рен кӗлӗпе яланах Турра кӗлтӑвӑр, тархаслӑр. Яланах Турӑ Сыв-
лӑшӗпе килӗшӳллӗн пуҫҫапӑр. Ҫакна ҫирӗп тытса пырса мӗн пур
ӗненекенсемшӗн кӗлтӑвӑр. 19 Маншӑн та кӗлтӑвӑр. Ырӑ Хыпар
вӑрттӑнлӑхне хӑюллӑн хыпарлама ҫӑварӑма уҫсассӑнах, Турӑ
ӑна кирлӗ сӑмах патӑрччӗ тесе кӗлтӑвӑр. 20 Сӑнчӑрласассӑн та,
эпӗ – Ырӑ Хыпар элчи. Тивӗҫӗме пурнӑҫласа, манӑн уҫҫӑн та хӑ-
юллӑн Ырӑ Хыпар пӗлтересчӗ. Ҫавӑншӑн кӗлтӑвӑр.

*Сывпуллашни*

21 Манӑн ӗҫ-пуҫ ҫинчен, эпӗ мӗн туни ҫинчен вара сире Тихик
каласа парӗ. Вӑл манӑн юратнӑ ӗненекен тӑванӑм, Хуҫа Туррӑ-
мӑрӑн шанчӑклӑ тарҫи. 22 Эпӗ ӑна сирӗн патӑра хамӑр ҫинчен ка-
ласа пама тата сире хавхалантарма ятӑм.

23 Атте Турӑпа Иисус Христос Хуҫамӑртан канӑҫлӑх тата ӗне-
нӳллӗ юратулӑх пултӑр сире, тӑванӑмсем. 24 Иисус Христос Ху-
ҫамӑра ӗмӗр-ӗмӗр юратакансене пурне те Турӑ ырӑлӑхӗ пултӑр.
Аминь.